К С(4УВ)
С 77
4-36746



Виталий Станьял

Тухса пыратăп, эс мана чараймăн...

Национальная библиотека ЧР
ББК 84 Чув
С76
4-036746

Виталий Петрович Станьял

Тухса пыратăп, эс мана чараймăн...

(Парнеленĕ сăвăсенчен)

ПРОВЕРЕНО
2010

Редактор: Патмар Э. И.
Технический редактор: Патмар С. Э.

Виталий Петрович Станьял
(60 çул тултарнă май)

Чăвашсен паллă таврапĕлӳçи, журналисчĕ, педагогĕ, тĕпчевçи, Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн литературоведенипе фольклористика пайĕн заведующийĕ.

Вăл 1940 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнче Чăваш Республикинчи Шупашкар районĕнчи Пĕчĕк Сĕнтĕр ялĕнче çуралнă.

Отпечатано на принтере. Тираж 7 экз.

4-36746
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

© Сергей Патмар

К К КС(чув)
С 77

Яш пуҫа таятăп

Халь мана савать тĕнче,
Тĕнчене саватăп эпĕ.
Ырă кун ытамĕнче
Эп хама телейлĕ тетĕп.

Картлатса тапать чĕре.
Кам ăна чарма пултарĕ?
Ҫитепех ҫитес ҫĕре –
Ҫунтăр ҫеҫ чĕре кăварĕ.

Ҫунатпа телей вĕҫет,
Чун ҫунатлă вăл, пĕлетĕп.
Юратап тăван ҫĕре,
Эп ăна хампа виҫетĕп.

Хура халăх умĕнче
Яш пуҫа ҫĕре таятăп.
Ёмĕт пур чун ҫумĕнче,
Мĕн хушан, ҫавна тăватăп.

1956, ҫĕртме, 24,
Ишлей пуххи.

84.09(=чув)6-52



"Атте вырăнне пултăн эсĕ пиччем ..."
В.П. Станьял аслă пиччĕшĕпе Сергей Петровичпа.
Шупашкар, 1954 ç. июлĕн 6-мĕшĕ.
Çиччĕмĕш класс пĕтернĕ хыççăн.

Ир пулакан çимĕçсене ан тиркĕр,
Ир пиçекен çырласене ан тиркĕр.
Вĕсем пиçмен чухне çу кунĕ тĕссĕр,
Вĕсем пулман чухне пахча та хĕсĕр.

Пăр çапасран хăрамасла ўсеççĕ,
Çын кăмăлне савăнтарса пиçеççĕ.
Чăтăмсăрсен чарак çукне пĕлмеççĕ,
Савăнăçра инкек пурне пĕлмеççĕ.

Ир пиçекен çимĕçсене ан тиркĕр,
Йăран таптакана сим йĕрĕх сиртĕр.

1957, утă, 20.

Урам урлă юлхавлăн утмастăп,
Юрламастăп шух юрă çĕрле,
Юрататăн-и, çук-и – ыйтмастăп,
Пултараймăп ыйтма кĕлмĕçле.

Эп пĕлетĕп: таса юрату вăл
Пайланмасть вак-тĕвеклĕх çине,
Эс ăна, хăть çунтартăр вут-тăвăл,
Хураймастăн кашнин аллине.

Хĕр чĕри çăмах мар, тенĕ ĕлĕк,
Салатман ăна вĕттĕн татса...
Мĕн çинчен эп санран ыйтса пĕлĕп –
Хам сана вилес пек юратсан?

1957, Çӳлтикасси ялĕ.

Килнĕ чух – шап-шурă юрччĕ,
Каяс умĕн ирĕлчĕ.
Каласах сăмахăм пурччĕ,
Калаймарăм – сирĕлчĕ.

Çĕр питне шуратаймарĕ
Юрлă-пăрлă юпăнчă.
Çуллахи кунсен кăварĕ
Васкамасăр хупăнчĕ.

Хĕл ларас чухне çанталăк
Сĕлкĕшлĕ те ирĕлчĕк.
Кăмăла уçăлтармалăх
Юр е çумăр кирлĕччĕ...

1957, Шупашкар хули.

Те пĕлсе, те пĕлмесĕр мана эсĕ кĕртрĕн
Тĕлкĕшсе тăракан тĕтĕм-сĕрĕмсĕр вут-кăвара.
Çунакан ăшчике лăплантарăн тесе эпĕ кĕтрĕм,
Эп кĕтсе шаннине эс каллех вут çинче хăваран.

Çунтăрах юрату. Тăмсайсем çеç тиркевлĕн лăхлатĕç,
Айвансемшĕн кăна сĕрĕмпе хупăрланĕ хĕвел,
Ачашсем аташса пĕрчĕн-пĕрчĕн ука вĕçне татĕç,
Чăлах чунлă çынсем юрату çине çакĕç йĕвен.

Çунакан юрату умĕнче айванла чĕркуçленмĕп –
Нарспипе Сетнерсем çĕр çинче мансăрах сахал мар.
Ман таса юрату сана тивĕç марришĕн вĕçленмĕ,
Ăшăмра хĕмленет нихăçан та сӳнми вут-кăвар.

1958, Шупашкар хули.

И.Я.Яковлев ячĕллĕ пединститут студенчĕсем:
Виталий Станьял, Василий Минин,
Денис Гордеев.
Шупашкар, 1959, июнĕн 4-мĕшĕ.

Катăк пуртă,
Тутăх лум.
Хытă çыртăк.
Çĕтĕк тум.

Выçса кайрăн –
Хуп кăшла.
Пуçна тыт та –
Шухăшла:

Чăштăр-чаштăр
Сĕм вăрман –
Эс вăрлатăн –
Эп курман:

Эсĕ – кашкăр
Эс – пуян!
Хӗрем татăк,
Эп – куян...

3. 01. 1963. Асанкасси ялĕ,
Шăмăршă районĕ.

Пасна çинче тĕтреллĕ хум тăрать,
Хырсем çине хĕлхем ӳкет вут айĕн.
Чĕрем шайхуллă, шухăшăм кăра,
Тухса пыратăп, кам мана чарайĕ?

Савни те çук, саваканни те çук,
Çак вăрманта чĕре сури тупаймăн!
Асап вĕçне çурса тăкам ку чух,
Тухса пыратăп, эс мана чараймăн!

6, юпа, 1963, Асанкасси кĕперĕ.

Ӳкĕтлесе ăрăслама та,
Пуçа пĕксе тархаслама та
Çитмест ни ăсăм, ни пĕлӳ.

Читлĕх чĕппи пекех туятăп,
Ăш пиçнĕ кайăкла куматăп.
Пуçăм тулли – пин тĕмсĕлӳ!

Темскер çитменĕ, тем асапĕ,
Çул тĕлсĕрри, чун хĕсĕрри,
Аваллăх ăрăмĕ – тĕрри...

Ăрăсласа ӳкĕтлеме те,
Пуçа усма та эп пĕлместĕп –
Айван-çке пуçăм мĕн тери!

9, юпа, 1963, Пăчăрлă Пашьел.

Ан юрласам, пике, çумра
Салхуллă Грузи юррине эс...
А.С.Пушкин

Юрла, юрла хавас саспа,
Маттур салтак пек хаклă тусăм!
Эс – каясла, эп – каясла
Утатпăр пусăм хыççăн пусăм.

Сассу янравлă та таса –
Пайтах сар хĕр асне хăварĕ.
Ăсатĕ-ха хапха уççах
Пире Асанкасси тутарĕ...

Юрла, яш тусăмçăм, юрла!
Сан сăввупа чуна ăнланăп.
Çыран тулли Пасна урлах
Янравлă сассуна тăнлатăп.

Мĕн пӳрнĕ-ши пире унта?
Шыв леш енче мĕнле килпет-ши?
Кайма тивет пире кунтан
Салтак пек çаврăнса килмешкĕн...

Юратас пулать хамăрăн вĕренекенсене, хамăр суйласа илнĕ ĕçехĕле, хавхаланас пулать хамăрăн чун туртăмĕпе те кашни куллен, кашни сехетсерен – пит нумай тăрăшмалли, ĕçлемелли, шухăшламалли, чăкленмелли – шанса панă шăллăм-йăмăксемпе пĕрле ăçес пулать, тăванăм. Вăт вара йăлт малашлăхра ăмсанмалла шет пулĕччĕ, яп-яшă тус вĕрентекенĕм!

15, юпа, 1963, Пăчăрлă Пашьел шкулĕ.

Эс çырсассăн эп те çырăп,–
Терĕмĕр те иккĕн,
Сăмахсем – шупка та çырă –
Тупăнчĕç пĕчиккĕн.

Кам çырни чипертерех-ши,
Хăшĕн кăшт хивре-ши?
Ан ятла сăмах хиврешĕн –
Кăмăлăм хитре-ши?

1972.

Мĕн-ма-ши ывăнмасăр варкăшатăп?
Çан-çурăм çунатланнă пек хавас –
Эп сан куçусенче вăй-хал куратăп,
Чуна çĕклентеретĕн, мĕн тăвас?

Мĕн-ма-ши лăпланмасăр йăлкăшатăп?
Сăн-питĕм хĕвелленнĕ пек хавас –
Эп сан куçусенче вут-хĕм куратăп,
Чуна хĕмлентеретĕн, мĕн тăвас?

Мĕн-ма-ши чарăнмасăр сăмахлатăп,
Чĕлхе-çăвар сымпыллă пек хавас –
Эп сан куçусенче ыр пил куратăп,
Чуна ирĕлтеретĕн, мĕн тăвас?

Текех ан кил, ан çыр тесе мана
Савни ытла та хытă хурлантарчĕ –
Çапла калаççĕ тĕлсĕр тăшмана,
Мана та тĕлсĕрсен картне хăварчĕ.

Айван чĕре вутпа çунса тухать,
Çил-тăманпа чухса кăшт сӳнтерем-ши?
Пĕтĕм тĕнче шур пĕлĕт пек юхать,
Анчах та ăш-чике кĕмест вăл темшĕн.

Эй, çил ачи, ташла ман пуç тавра!
Çил хĕрĕсем, алхасăр кутсăр-пуççăр!
Эсир хускатнă вĕçсĕр шăв-шавра
Эп хамăн асапа типтерлĕн усрăп.

Эсир манпа пĕр кăмăллă паян,
Апла пулсан, мĕн-ма хивре сикместĕр?
...Савни патне ытти килен-каян
Çӳрет-ши ман пекех телей-сипетсĕр?

26, чӳк, 1973, Кӳкеç – Шупашкар.

НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ
4-36746

Çул шыраншăн – çунтăр çăлтăр,
Иккеленчĕке – сĕнӳ,
Шăннă çыншăн тăлăп пултăр,
Кĕтекен чуна – чĕнӳ.

Эп санран шанса кĕтетĕп
Чун сурилĕх пĕр сăмах.
Вăл сăмах мĕнне пĕлетĕн,
Эс ăна калатăнах.

Пурлăх-ырлăх та ĕçкĕ-çикĕ,
Хапсăну та суя тĕрек
Шырасассăн – пурне те çитĕ,
Ăмсансассăн – чунах кĕрет.

Манлăх-санлăх кӳрен йăпанăç
Кăмăла мăнтăрпа витсен
Çын ăсне хупăрлать те канăç –
Чун кăвайчĕ сӳнет иккен!

Кĕрлесе тăракан кун çулăн
Кĕрешӳ те пур, пур хисеп.
Ялкăшать те сӳнет вĕт çулăм,
Вăйлă çулăм хурасшăн эп.

1976.

Чĕвĕл чĕкеç пек кĕвĕллĕ
Сывпуллашу, калаçу.
Çамрăклăх савăк ĕмĕтлĕ,
Савăксăр çамрăклăх çук.

Кăлтăртăк-кăлтăртăк–кăлтăртăк,
Кăлтăртатать кустăрма...
Кăмăл хаваслăхне хăвăрттăн
Пуйăс васкать пусăртма.

Эпĕ те ирĕклĕ йĕкĕтчĕ,
Манăн та пурччĕ çунат.
Тĕтĕм те сĕрĕм пĕлĕчĕ
Татрĕ çӳрес çула.

Касрĕ суха та юпăнчă
Çил урхамахăма.
Măн Çĕнтерӳ кăна юлчĕ-тăр
Чун ăшшине хăпартма.

Çӳрĕттĕм эпĕ те çулăмлă –
Темĕн хĕсет кăкăра:
Манăн хаваслăхпа çуммăнлă
Вăрçă суранĕ тăрать.

Кăлтăртăк-кăлтăртăк-кăлтăртăк
Кăлтăртатать кустăрма.
Эп ăсатмашкăн çеç юлнă-тăр,
Тен, асăнса пурăнма.

1978.

Мускавра, Ваганька масарĕнче.
Сергей Есенин палăкĕ умĕнче Владиимир Рыбкин ("Çилçунат" литпĕрлешӳ канашĕн председателĕ)
тата Виталий Саньял
1979, апрелĕн 30-мĕшĕ.

Каймăттăм, каймăттăм эпĕ
Хам çĕршывран аякка.
Ют çул-йĕрсем, пĕлетĕп,
Пулмĕç нихçан та яка.

Ют çулçӳрев мĕн пачĕ?
Пачĕ тасалăх чуна.
Аслă çĕршывăм – ун ячĕ,
Эпĕ ăнлантăм ăна.

Каймăттăм, каймăттăм эпĕ
Савнă çĕртен татăлса.
Кайнă пулсассăн – килетĕп,
Вăй вылятмастăп ăса.

Пулĕ-и пурнăç тумхахлă,
Шутлă кунсем-и умра –
Савнă çĕршывăм, эс хаклă,
Эс ĕмĕрех ман çумра.

1978.

Ăçта çитсен те,
Мĕн кăна тӳссен те –
Тĕнче сӳнмест, тĕнчешĕн хурлăх çук.

Сиксе вĕçсен те,
Çаврăнса ӳксен те –
Чун çӳçенмест Çĕршыв юратнă чух.

Кун-çул ăнмарĕ,
Ĕçлеме пулмарĕ
Темешкĕн сăлтав çук пирĕн, пиччe.

Эппин, эпир, тăванăм,
Савăнмалла кăваррăн –
Пĕрле кĕрлетĕр пĕтĕм çут тĕнче.

1979.

Чăваш АССР
тава тивĕçлĕ мĕлкеçне
Элли Михайлович Юрьева

Эрешçĕ ентешĕм Эмюр...
Каллех Çĕнĕ Çул, шурă юр,
Каллех тĕнчере юрă пур –
Юрлар-и пĕрле çавăрса,
Ăсчах чун-чĕреллĕ Эмюр?

Илемлĕ ентешĕм Элли,
Асра-и савса кĕтмелли,
Алра-и ванса пĕтмелли –
Ĕçлер-ха çанна тавăрса,
Вăй патăр, вăртахăм Элли!

29. 12. 1981. Шупашкар

Пĕлӳ керменĕ
Чăваш АССР
Кĕнеке палатине

Кĕнекере сӳнми çăлкуç,–
Тет Йӳçĕ Макçăм.
Вуланăçем пирĕн ăс-пуç
Ӳсет пăртакçă.

Хакланчĕ халĕ кĕнеке,
Пĕлӳ йӳнелчĕ.
Укçа чăпаййăн илекен
Кĕнекеленчĕ.

Хаклийĕ çĕр çинче мĕн-ке?–
Тесе ыйтсассăн:
– Хитре хуплашлă кĕнеке,–
Тееççĕ ассăн.

Пире хуппийĕ кирлĕ мар,
Пулсанччĕ ăшĕ!
Лавкка, Палата, антиквар–
Ăс парĕ хăшĕ?

Упрать чăвашăн ăс-тăнне
Пичет Керменĕ.
Мухтать ăс-хакăл керменне
Кĕни-кĕменĕ.

Кĕмешкĕн алăкĕ унта –
Виç хутлă алăк.
Черечĕ – хапхаран тулта! –
Иртме çук халăх.

Çапах та хушăран пĕрре
Кĕрсе тухатпăр.
Халь çавăнпа – ўксе çĕре –
Пуçа таятпăр.

Эс – хыткукар, çĕрме пуян,
Анчах – сăвăплă:
Пĕлў вăл йўнелмест нихçан,
Пĕлў – хăватлă!

Кермен! Чăвашăн ăс-халне
Пуçтар пăсмасăр:
Паянхине те авалне
Малаш ăмсантăр.

1981, раштав, 2.

Йўçĕ Макçăм – А.М.Горький

Хурав

Ман ылтăн çупкăнăм, ĕçченĕм,
Ик куç илемĕ, чун ăшши!
Виç сăмахху вĕçет чĕкеçĕн
Çулсем те çухрăмсем хушши.

Кĕрет вăл айăкăн-инçетĕн
Ман тĕксĕм тĕслĕ пӳлĕме.
Кашни сăмаххуна виçетĕп,
Пĕрле илетĕп ӳлĕме.

Ытла та аслă çут тĕнчемĕр,
Çул-йĕрĕ вăрăм, кун кĕске.
Эс пулмасан, тек кам тĕпчетĕр,
Кам виçтĕр пирĕн ĕмĕте?

Пур ĕмĕт те тӳрре килеймĕ –
Пĕри хăть тухтăрччĕ тӳрре:
Ман ылтăн çупкăнăм, илемĕм,
Телейлĕ пулччĕ тĕнчере!

13. юпа, 1983. Шупашкар.

Çилçунатçăсем К.В.Иванов йăмăкĕ Валентина Васильевна Мунишкина патĕнче хăнара.
Самар тăрăхĕ, Похвиçнĕ хули,
Пушкин урамĕ, 41.
1983, июлĕн 9-мĕшĕ.

Ю.П. Матросов ӳнерçе

Ларса шутла та çавăрса кăлар,
Касса чутла та кирлине хăвар –
Ăс-пуç хăвачĕ, кăмăл выляни
Каска пуканĕ мар иккен, ами!

Ĕçлекенни сахал, ĕçекенни пайтах,
Çак саманан нумаях мар пайта...
Ăста тесе ахаль кăна каламĕç –
Эпир ĕçсен те, эс, тăванăм, ан ĕç!

Сăрла, ăста чăваш, сăрла кăна –
Тĕнче савать пĕлсе сăрлакана.
Ютсен çĕрне пĕремĕк пек тусан та
Тăван çĕрӳ ĕлĕкхиллех тусанлă ...
Мухтасчĕ сан тусан шăлакана!

Пухас чухне – пайларĕ Шупашкар,
Шĕкĕр хула пире памарĕ осă...
Ентешлĕхе чăмăртакан кăшкар
Пулсамччĕ эсĕ, паттăр çын Матросов!

1997, нарăс, 9

Таврапĕлӳçĕ
Валериан Прокопьева

Ах, Илтерĕм, Илтерĕм!
Ĕмĕр юлчĕ хыça.
Яшă ĕмĕт минтерĕ
Тек лăпкамĕ пуça...

Кам лăскарĕ те ватрĕ
Пирĕн çут шухăша?
Шатăрах касса татрĕ
Ăс-пуça та ăша?

Çиçĕм çапнă юманçă
Хуçăлса, татăлса
Тăвăл айĕн танкканчĕ
Çапăнса, такăнса...

Пулчĕ пурнăç тăварлă,
Касрĕ шелсĕр çава.
Эс те чăтрăн, тăванăм,
Парăнмарăн çавах.

Ах, Илтерĕм, Илтерçĕм,
Яшлăхри çил çуна!
Сан яту ас илтерчĕ
Иртсе кайнă куна...

15. 03. 1997.

Чăваш халăх артисткине
Светлана Михайлова – Ефимовăна

Ункă сăрчĕ. Мăн пĕве.
Йăмрисем парка.
Чун тулли куçа кĕрет
Çатра ял Марка...

Тем тесен те, тĕнчере
Тăван ял паха!
Хăй ялне савман чĕре
Çĕр çинче сахал.

Ял вăл – ĕмĕрсен чикки,
Хаклă çавăнпа!
Ан хурлан, чăваш пики
Çутланпи аппа...

16, пуш, 1997

Арçук Тарасова

Халь пуплетпĕр каялла виçеллĕ –
Хăшне тĕрĕс, хăшне йăнăш тунă?
Кама лекрĕ хĕç, кама – пуçелĕк,
Кама мĕншĕн çĕр тĕпне те хунă...

Пĕрлешсе ĕмĕтленни, мăнтарăн,
Чăхăмлашнă лашалла шăмарчĕ.
Пурнăç ĕмĕтленнĕ пек тухмарĕ,
Çутă ĕмĕт вут пуççи хăварчĕ...

Вут çунни те, ăш хыпни те пулчĕ,
Пулчĕ тăшмана тытса вĕтни те.
Çав йăлтах юмах пек тăрса юлчĕ,
Малашне ăна та тамăк витĕ...

1998, çу, 26.
Треппел ялĕ, Пушкăртстан

Кирилл Кириллов асăмне
(“Çилхеллĕ, çиллĕ Пушкăртстанăм”
ярăмран)

Тĕлпулу çитиччен
Чылай хушă хумхантăм.
Килсе çитрĕм те халь
Лăш лăпланчĕ чĕре:
Шурă мрамор çинче
Калаçса пек ларатăн,
Гранитран тунинче – курăнан чĕп-чĕрех.

Ăнланан чиперех:
Эп – ватти, тем пулсан та.
Эс, Кирук, кĕçĕнрех,
Хăть мĕн ту – ĕмĕре...
Ман санпа вакласси
Пĕр хутаç та пĕр алтăр,
Калаçса, шутласа
Тасалар-и пĕрре?

Çук, чĕнместĕн пĕрех
Чĕнесех туйăнсан та,
Тен, ўпкев те чĕрет
Чунсене витĕрех.
Сывă чух тĕл пулсан
Ним те мар пит ансатăн
Калаçу астарса
Йыхăратчĕ пире.

Халь тĕнче ўппĕнле.
Тен, кăшт хамăр та халсăр.
Ни сăмах тупăнмасть,

Ни ĕçме кăмăл çук.
Аçупа аннӳне каласне
калаймасăр
Хурланса-эрленсе
Пуçне чикрĕ Арçук.

...Аслă пӳрт варринче
Чĕвĕлти чипер чунлă
Чиперчче Укçине
Чечекле çаврăнать.
Ĕмпичче аллинче
Парне пек тăрса юлнă
Тăнкăр-тăнкăр кĕсле
Чăнкăрт турĕ кăна...

Кăтаймас ялĕ
1998, çу, 27

Александр Мефодьева

Юхать Хырла, юхать Пăла,
Юхаччĕ Ункăпа Кĕтне...
Чăвашлăх пур, Чăваш пулать,
Памастпăр Чăваша пĕтме!

Пурнать Еншик, ўсет Нăрваш,
Чечексĕр мар-ха ешĕл вар...
Сăрт пултăн хăв, Анат Чăваш,
Хăв Улăп пултăн, Туливар!

Тавах, вăртахăм! Çак шăпа
Яш чух картнипеле пĕр тан:
Кунçул тўпи санра шăпах,
Тасалчĕ вăл шуçлак пăртан!

28, чўк, 1998.

Н.И.Егорова

Ăслă çын М.И. Кулая
Хĕстермешкĕн хул ая,
Çӳремешкĕн хулая
Меллĕ пысăк пухчă.

Пухчă вăл хутаç пекскер,
Сăмахсем хĕсмеллискер,
Сана шутсăр кирлĕскер –
Илме хапăл пулччĕ!

Пуç таятпăр ыр сунса!
Савăн тулăх пурăнса,
Авăртса пуçри ăса
Чăваша çын туччĕ!

1999, нарăс, 20.

С.Р.Малютин ăсчаха

Çăлтăр пек сирĕн кунçулăр –
Ирĕклĕ, çутă, таса!
Аслă ăспа хывнă çулăр
Вырттăр умра çуталса!

1999, юпа, 28. Шупашкар

Аристарх Дмитриева

Вырăсран чăвашлана
Куçарсан – чăвашланан,
Чăвашран вырăслана
Çавăрсан – вырăсланан.

Чăвашла та вырăсла
Чашкăрсан çăра ăсла
Вырăсла та чăвашла
Çаптарса пĕрре ташла!

21, раштав, 1999

Шĕнерпуç сăввисем

Халь ир кăна...

Иртнĕ кунпа çула виçместĕп –
Халь ир кăна, халь ир кăна!
Ирхи хĕвел манран писместĕ,
Чĕнет! Тăрам та вăркăнам!

Мĕскер мана умри çил-тăвăл?
Мĕскер мана хура тăман?
Хĕвел ачи пулса эп тăтăм,
Хамран Хĕвел пĕрчи тăвам!

Альпăрт Канаш патне кĕрсе тухнă хыççăн

10.09.1957

Хал пур чухне

Ирхи пайăркасем илемлĕ,
Ирхи хĕлхем шерпет пекех –
Чĕре çине сарçу килетĕ,
Вăя пухса ĕçлес килет!

Мĕскер мана вăл янкăр сивĕ,
Мĕскер мана çав йĕплĕ пас?
Лава тапса туртмалăх тийĕр,
Хал пур чухне тапса туртас!

Ачашшăн, кăмăллăн, хисеплĕн
Çавра Хĕвел савать мана!
Ытти савакана пĕлместĕп,
Савма пĕлетĕп эп хамах!

Мĕскер мана сив тăвăл хумĕ
Ирхи Хĕвел манпа кулсан!
Ман хурçă шанчăк тăлăх юлмĕ
Чунра Хĕвел çути пулсан!

Иакинф Бичурин 220 çулне кайсан

10.09.1997

Ю. А. Краснова

Куçлă çăл – куçлă çĕрĕ пекех –
Хĕвелпе те вылять, уйăхпа та,
Çăлтăрпа та вылять çĕрĕпех –
Çавăнпа çĕррĕме шыва ятăм:

Пулччăр-и ик вылянчăк пĕрле –
Йăлтăрпа йăлтăркаллăх йăпантăр!
...Шăнкăр саслă çăлкуç пек хĕрпе
Эпир мар, хăй пекки сапăрлантăр.

1999, çурла, 2, Чантăр ялĕ.

5=00

Кил-йышпа – Атăл леш енчи йăлăмра
1987, пуш уйăхĕ.